Ял хуçалăх техникине хĕллехи управа мĕнле лартнине тĕрĕсленĕ май

# Мăн Хураçкара çитес çур аки пулĕ-и?

## *Кун пирки ыттисен те шутласан пăсмасть*

**Паян кахал çын çеç çĕнĕ технологисемпе наци проекчĕсем пирки калаçмасть. Эпир те вĕсене хирĕç мар, анчах ял хуçалăх техникине хĕллехи управа лартнине тĕрĕсленĕ май çăкăр тума пулăшакан**



**Мăнсĕнтĕрсен управа лартнă “хир карапĕсен” бункерĕнче юлнă тырă шăтса кайнă. Мĕн темелле кун хыççăн?**

**техника çине алă сулни те тепĕр çĕрте çĕнĕ технологие “аса илтерет”. Иккĕмĕш çаврăмри рейдра юлашки сăтăркăна “Передовик”, “Нива” чикĕллĕ яваплăхлă общество, “Рассвет” агрофирма, “Хлебороб”, “Волга”, “Колос” хуçалăхсем тĕрĕслев серепине лекрĕç. Тӳрех çакна калар, урамра чӳк уйăхĕн виççĕмĕш вунăкунлăхĕччĕ пулсан та, асăннă хуçалăхсен ытларах пайĕнче хĕл çитнине сиссе хыпаланни курăнмарĕ! Çапла çав, наци проекчĕпе те çĕнĕ технологи сĕмĕсемпе витĕнсе сахăр нумай тенипех çăварта пылак пулмасть.**

Тавралăх шурă юрпа витĕннĕ май ăшă та уяр çу кунĕсемпе йĕпе-сапана пăхмасăрах тулăх кĕркуннене хĕрӳ ĕçре ирттернĕ çĕр ĕçченĕсем хĕле хатĕрленнĕ май кăçал мĕн пурнăçлама



**Çакăн пекки те пур-ха хуçалăхсенче: Шетмĕпуçĕнче çур акире акнă пăрçа вăрлăхĕн юлашки паян та сеялкăран тасалайман...**

ĕлкĕрнине пĕтĕмлетеççĕ, ăна тишкерсе малашлăх задачисене уçăмлатаççĕ. Сăмах нумай вакламăпăр, районти хресченсем хăйсен çăмăл мар ĕçĕн пысăк пайне ял хуçалăх техникин пулăшăвĕпе пурнăçланăран паян вĕсене епле упрани тата ку тĕлĕшпе мĕнле ĕçлени çинче чарăнса тăрар. Тĕрĕссипе каласан, çакăнтан пуçланать те вăл çĕнĕ технологи. Анчах темшĕн-çке пуçлăхсемпе тĕп специалистсем çĕнĕ технологи çинчен сăмах пуçарсан, тӳрех темиçе ĕçе пĕр харăс пурнăçлакан агрегатсемпе çĕнĕ йышши вăрлăх, ытларах продукци паракан ăратсем, минераллă удобренипе ӳсен-тăрана сыхлакан препаратсем пирки калаçма пуçлаççĕ.

Иртен пуçласа каçчен, тепĕр чух çĕрĕпе хирте ĕçлекен техника ĕмĕрĕ вара çĕнĕ технологи хĕрринче юлать. Тĕрĕс-ши çакă? Чĕпсене шутлама вăхăт çитсен, пĕрисен тырпул тухăçĕ гектар пуçне 14 центнер, теприсен 24 центнер пулнине курсан тин ĕнсе хыçма пуçлани Раççей Пĕтĕм тĕнчери суту-илӳ организацийĕн алăкĕ умĕнче тăнă чух питех те вырăнсăр пулни пирки шкулта экономика предметне вĕренекен ачасем те аван пĕлеççĕ, анчах... Çултан-çул çак яваплăсăрлăх пире каялла туртса пырать. Çав вăхăтрах техникăна ГОСТпа килĕшӳллĕн управа лартни унăн ĕмĕрне тăснине, хуçалăхăн укçи-тенкине перекетленине, умри ĕçсем валли çул уçнине ял хуçалăх ĕçĕпе пурăнакан та, çак ĕçрен айккинче тăракан та аван туять.

**“Передовик”.** Хуçалăха эпир кăнтăр апачĕччен çитрĕмĕр. Мехпаркра шăплăх хуçаланать тесен тĕрĕс мар пулнă пулĕччĕ.

– Çак техникăпах çитес çул та ĕçлемеллине ăнланса çуркуннерен кĕркуннеччен ĕçленĕ техникăна май пур таран тирпейлĕрех управа лартассине юлашки кунччĕнех кун йĕркинчен кăлармарăмăр. Техникăна управа лартнипе пĕрлех ăна юсаса çитес çур акине хатĕрлес ыйтăва та айккине хăвармарăмăр. Çапах йăлтах турăмăр тесе калаймастăп. Мĕн йăнăш пулнине ăнланатпăр, вĕсене малашлăхри ĕçре сирсе хăварасси пирки шутлатпăр,– терĕ мехпарк территорине управа лартнă техникăна пăхма тухсан “Передовик” хуçалăхăн тĕп инженерĕ Николай Витальевич Потряков.

Чăнах та, Москакассисем ял хуçалăх техникине хĕллехи управа латассипе ĕçлемен тесе калаймăн. Чылай агрегат складсенче управ вырăнĕ тупнă. Вĕсене çунă, тасатнă, анчах урама юлнă техникăн урăписене шуратма ал çитеймен. Тата гараж умĕнче алăкран 10 метрта пылчăкран тасалайман рулонлă прессспа выльăх апачĕ хатĕрлемелли кăçал туяннă “Волга-2” агрегат мĕскĕннĕн “упранни” пĕтĕмĕшле ӳкерчĕке пăсрĕ. Москакассисем чăн çĕр ĕçченĕсем пулсан, çак “пĕчĕк” çитменлĕхе вĕсем халиччен пĕтермеллеччĕ ĕнтĕ, мĕншĕн тесен Сĕнтĕр зонинче çав кун техникăна управа лартасипе вĕсенчен лайăхрах ĕçлени куç тĕлне пулмарĕ. Вăт çапла çав, Москакассисене Мăнсĕнтĕрсем те, Мăнхураçкасемпе Шашкарсем те техникăна управа лартассипе çитеймеççĕ. Апла пулсан вĕсен çитес çур аки çăмăл пулас марри паянах паллă. Хамăр кахалшăн Президента та, Генеральнăй секретаре те



**“Хлебороб” хуçалăх паркĕнче хăшĕ управра: ĕçлекен техника е металлолом?**

вăрçма çук.

**“Нива” чикĕллĕ яваплăхлă хуçалăх.** Тĕлĕнмеллипех тĕлĕнтĕмĕр Мăн Хураçкана çитсен. Мехпаркра шурă юр кăна. Хĕл пуçланать кăна та вăл та сахалрах. Ял хуçалăх техники вара унта кăнтăр кунĕнче хунарпа шырасан та çук. Ăçта техника?.. Ыйту хуравсăр юлать... Хăçанччен?... Ку лару-тăрупа Мăнхураçкасем çитес çул çур аки тăвайрĕç-ши?.. Ыйтусем, ыйтусем... Вĕсем те шурă юр айне пулĕç-ши?..

**“Рассвет” агрофирма.** Мăнсĕнтĕрсем те техникăна управа лартман тесрен хиртен кĕнĕ техникăна пĕр рете вырнаçтарнă та комбайнсен жаткисене вĕçертнĕ. Çакăнпа ответлă ĕç вĕçленнĕ. Комбайнсен бункерĕсенче юлнă тырă шăтса кайнă. Калча шит çӳллĕш. Ку пире тырă калчи тумалли çĕнĕ технологие



**“Рассвет” агрофирмăн автотрактор паркĕнче тырă аламалли сортировкăсем пĕр ретре юр айĕнче лараççĕ. Вĕсемпе ĕçлесен вăрлăх нӳрĕклĕхĕ чакĕ-ши?**

аса илтерчĕ. Килĕр! Вĕренĕр! Шăтайман тырăна вара çĕрçисем çисе савăнни те “усал ĕç мар”. Тырă акнă чух хамăр валлилĕх те, кайăксем çимелĕх те пултăр тесе кĕл туни Мăнсĕнтĕрсемшĕн ума килнĕ. “Хир карапĕсен” двигателĕсене ГОСТпа килĕшӳллĕн управа лартма юрпа картлани те полиэтилен пленка илсе укçа-тенкĕ тăккаланинчен перекетлĕрех. Каллех çĕнĕ технологи. Йывăр дисклă сӳресемпе энерги перекетлеме пулăшакан кăçал туяннă КНК–4 агрегат юр шывĕпе кĕрхи пылчăкран çăвăнаççĕ.

**“Хлебороб”.** Хуçалăхра техникăна управа мĕншĕн лартнине те пĕлмеççĕ пулас. Комбайнсен бункерĕнчи урпа вĕсем юлашки хăш хирте пулни пирки калаççĕ. Пĕрин бункерĕнче тата çур бункер майлă люцерна вăрри пулни, сеялкăсенче тулă пулни, культиваторсем паркрах “тупăшса çĕр хатĕрлени”, ĕçлекен техникăпа металлолом “туслă пулни” хуçалăх ĕçченĕсемпе специалисчĕсем çĕр ĕçĕпе ача вăййи туни чуна хурлантарчĕ. Капла та малалла çул пур-ши?

**“Волга”.** Техникăна управа лартассипе ĕçлемен теес килмест, анчах пурнăçламан ĕçсем чылай-ха. Çакна управа лартнă икĕ “хир карапĕнчен” инçех те мар çум ытамĕнче ларакан культиватор та çирĕплетет.

**“Колос”.** 25 çул каялла техникăна управа лартассипе республикăра кĕрленĕ хуçалăх (ун чухне вăл “Гигант” совхоз пулнă) паян сӳннĕ. Техникăна управа лартнишĕн, унпа перекетлĕ усă курнишĕн хуçалăха автобус, УАЗ çăмăл автомашина пани – паян архивра упранакан истори чăнлăхĕ. Вăл вăхăтри парк халĕ çум айне пулнă, çĕнĕ технологипе хыт хура ӳстерет. Вĕсем хушшипе пăхакан техника наци проекчĕ кунта çитессе кĕтет...

Мĕнех, текех техникăна управа лартасси пирки калаçмăпăр. Малалла вĕсене хĕл кунĕсенче кам епле юсани çине ытларах тимлĕх пулĕ.

**С. НИКОЛАЕВ, патшалăх техника надзорĕн районти инженер-инспекторĕ;**

**А. БЕЛОВ, район хаçачĕн ял хуçалăх пайĕн ертӳçи.**

Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсенче

# Хăйсен вăйĕпе 1830 тонна

Икĕ çемье пурăннă, тет. Пĕр ирхине арăмĕпе упăшки вăранаççĕ, тет те, çумăр çунине илтеççĕ, тет. “Çумăр çăвать, çывăрар-ха тепĕр-так”,– терĕ, тет те, арăмĕ, мăшăрсем ăшă ытамра малалла ыйхă авăртрĕç, тет. Кăнтăр тĕлнелле каллех ыйхă вĕçрĕ, тет, хайхисен. Ку хутĕнче упăшки калать, тет: “Халь те çумăр çăвать, паян нимех те ĕçлейрес çук, канар çывăрса”. Каллех ыйха путрĕç, тет, хайхисем. Çав вăхăтра кӳршĕсем тырă анин вĕçнелле те тухса пычĕç, тет. Урамра вара ватă ăвăс çулçисем калаçрĕç те калаçрĕç, тет. Çумăр пĕлĕчĕ катара та курăнман, тет.

Çак пĕчĕк юмахра ваттисем ĕçлекен çын çанталăка пăхманни, унăн кирек хăш условийĕсенче те хăйне валли ĕç тупни пирки вăлтса та вĕрентсе каланă. Паян та кивелмен çак чăнлăх. Акă, кĕрхи уй-хир ĕçĕсем вĕçленнĕ май çĕр ĕçченĕн техникăна управа лартса канса илмелле. Çапла тăваççĕ те ыранхи кунпа пурăнманнисем. Канăва мала хурса хăшĕсем техникăна управа лартасси пирки те манса кайнă. Аталану çулне суйласа илнĕ Исетерккĕсем вара кăçал урăхларах çул суйларĕç. Уй-хир ĕçĕсене вĕçленĕ, техникăна управа лартнă май хайхискерсем çанă тавăрсах çитес çул пирки шутлама пуçларĕç: ноябрĕн 17– 22-мĕшĕсенче вĕсем хăйсен вăйĕпех сумалли ĕнесемпе ĕневыльăх тытакан комплексран 3 çул кăларман тислĕке хире кăларса сапаласа хучĕç: 63 гектар органикăллă удобрениллĕ пулчĕç. Кăçал тулă пулнă хирте çитес çул урпа ăнса пуласси пирки çĕр ĕçченĕн халех иккĕленӳ çук.

Уйрăм сăмах тислĕк кăларакансем пирки. Комплексри тислĕке хускатса параканĕ тата хире тухнă тислĕке сапаласа хураканĕ – Владимир Никифоров бульдозерист. Тислĕке тракторсем çине тиенĕ çĕрте тимленĕ Болеслав Никитин механизатор органикăна хире кăларакансене пĕр самант та ĕçсĕр лартмарĕ. Унăн тăрăшулăхне кустăрмаллă тракторсемпе ĕçлекен Геннадий Илларионов, Иван Митрофанов, Леонид Филиппов механизаторсем çилпе вĕçтермерĕç.

Çичĕ кун хушшинче иртен пуçлас каçченех тислĕк тиенĕ тракторсем фермăран хире рейс хыççăн рейс турĕç. Çапла вара хуçалăх вăйĕпех Исетерккĕсем 1830 тонна тислĕке Тукас хирне кăларса хучĕç.

**Анатолий БЕЛОВ.**

Канашлу

# Çулталăка пĕтĕмлетсе, малашлăха пăхса

2006 çулхи уй-хир ĕçĕсем хыçа юлчĕç ĕнтĕ. Çавна май çĕр ĕçченĕ иртнине пĕтĕмлетсе малашлăха планлама та пултарать. Хăй ĕçне юратакан çапла тăвать те ĕнтĕ. Иртнĕ эрне кун район администрацийĕн ял хуçалăх управленийĕнче районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсен агрономĕсем хăйсен кăçалхи ĕçĕсене пĕтĕмлетсе малашлăх утăмĕсене палăртма канашлăва пухăнчĕç.

Иртсе пыракан çулта районти ял хуçалăх предприятийĕсем пĕтĕмпе 25,6 пин тонна, пĕлтĕрхинчен 4,7 пин тонна (16 процент) сахалрах тырă пуçтарса кĕртрĕç. Унăн вăтам тухăçĕ гектар пуçне 16 центнерпа танлашрĕ. Çав вăхăтрах районти çĕр ĕçченĕсем çĕр улми тата пахча çимĕç туса илессипе кăçал тухăçлăрах ĕçлени куçкĕрет. Пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем “иккĕмĕш çăкăра” пурĕ 18,9 пин тонна (гектар пуçне тивекен вăтам тухăç 148,1 центнер), пахча çимĕçе пĕтĕмпе 1600 тонна (гектар пуçне 127,4 центнер) туса илчĕç. Ку кăтартусем унччenхи çулхинчен 105 тата 170 процент пысăкрах. Районĕпе пăхсан, “Ударник”, “Волга”, “Восток”, “Герой”, “Свобода”, “Агроурожай” тата Чкалов яч. хис. хуçалăхсенче çĕр ĕçĕшĕн йывăр çул пулнине пăхмасăрах тыр-пул гектар пуçне 20 центнер ытла илме пултарчĕç пулсан, “Колос”, “Лидер”, “Передовик”, “Сеятель”, Е.Андреев яч. хис. пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе Матвеевăн тата Михайловăн хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче вăтам тухăç 7,8 – 11 центнерпа çеç танлашрĕ. Çĕр улми туса илессипе те лару-тăру çĕрпе пĕлĕт пекех. “Оринино”, “Ударник”, “Свобода”, Ильич яч. хис. пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе “ДаАн” чикĕллĕ яваплăхлă обществăра тата Бархаткинăн, Толстовăн хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче “иккĕмĕш çăкăра” гектар пуçне вăтамран 180 центнер пухса илме мехел çитернĕ пулсан, К.Иванов яч. хис., Е.Андреев яч. хис., “Лидер”, “Передовик”, “Чемеево” хуçалăхсенче тухăç 43–95 центнертан иртеймерĕ.

– Паллах, çанталăк условийĕсемпе сăлтавласа çухатусен сăлтавĕсене нумай кăтартма пулать. Анчах пĕрешкел условисенчех пĕрисем иккĕмĕшĕсенчен 2-3 хут çухатуллăрах ĕçлени, ман шутпа, вĕсем тĕпренех агротехникăна пăхăнманни çинчен калать. Кунпа пĕрлех ял хуçалăх техникине упрассипе юсасси çине çиелтен пăхнипе те тырă-пулăна хирте нумай хăвартăмăр. Паянхи кунпа çеç пурăнманнисем çакăн çине малашне пысăк тимлĕх уйăрасса шанатăп, – терĕ хăйĕн калаçăвĕнче ял хуçалăх управленийĕн ертӳçин çумĕ тата управленин тĕп агрономĕ Александр Ильич Павлов.

Иртнĕ çул вăхăтра акса хăварнă 2150 гектар кĕртрисем (мĕн акса хăварнин çурри) 25 центнер ытла тухăç пани ака технологине çирĕп пăхăнмалли пирки калать. Кăçал çакна шута илсе хуçалăхсем 3720 гектар çинче кĕрхи культурăсем акса хăварчĕç, 6581 гектар çĕртме сухи турĕç. Çав вăхăтрах “Агроурожай”, “Колос”, “Лидер”, Михайловăн хресчен (фермер) хуçалăхĕнче пĕр сотка та кĕрхи культурăсем акма “ӳркенчĕç”. Вĕсен тухăçĕ çитес çул пĕчĕк пуласси паянах паллă. Плансем вара никамăн та пĕчĕк мар.

Çитес çул район 16 пин гектар çинчен 28 пин тонна тĕш тырă,1300 гектар çинчен 19 пин тонна çĕр улми, 130 гектар çинчи пахча çимĕçрен 2 пин тонна продукци илме пăхать. Çакă пĕрлехи тăрăшулăхсăр пулмастех.

Мĕн акатăн – çав шăтать. 2005 çулта районти пĕрлешӳллĕ хуçалăхсем 327 тонна элита пахалăхлă вăрлăх акнă пулсан, кăçал кунашкал пахалăхлă вăрлăх 30 тонна çеç пулнă. Çакна евĕр лару-тăру çĕр улми вăрлăхĕпе те. Кунта паха вăрлăх туяннăшăн республика бюджетĕнчен тонна пуçне 4500 тенкĕ дотаци пани пысăк тĕкĕ пулнине чылай хуçалăхсем ăнланасшăн марри тĕлĕнтерет. Çав вăхăтрах “удача”, “петербургский”, “рокко”, “снегирь”, “жуковский ранний” сортсем пысăк тухăç никĕсĕ тата хуçалăх экономикине тĕреклетмелли çул-йĕр пулнине çакна ăнланнă хуçалăхсенчи ĕç-хĕл çирĕплетсе парать.

**А. ПЕТРОВ.**